24-мĕш çул тухать. Хакĕ 10 пус.

1941
ЯНВАРЬ
4
ШАМАТКУН
3 (5718) №

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ.

# ЧĂВАШ КОММУНИ

## КОЛХОЗРИ СТЕНА ХАÇАЧĔ

...опулшăн кĕрешес, колхоз-...ации пуçлăх енчен çирĕплетес, ...ественнăй хуçалăха вăйлатса пыра... çĕрте колхозри стена хаçачĕ çавтерăнăçăк вырăн йышăнса тăрать. Çавăнтăн кăшни колхозра, бригадăра стена хаçачĕ тухса тăрать. Вĕсен хисепĕ пысăк республикăра пиллерĕн шутланать.

Вунпăр пин çынсем, социализм строительствинче малта пыракан çынсем, стена хаçачĕсен кулленхи ĕçне активлăн хутшăнаççĕ, ĕççыннисен сăлака массине хăйсен паха опычĕсемпе паллаштараççĕ, вĕсем ĕççыннисене коммунистла воспитани парас енĕпе пархатарлă ĕçсем туса пыраççĕ.

Пирĕн коммунистсен партийĕ выränти пичете яланах пысăк вырăна хурса хаклать. Мĕншĕн тесен стена хаçачĕсем вĕсем рабочисен, колхозниксен, служащисен чи çывăх хаçачĕсем, ĕççыннисен çывăхĕнче, вĕсем патĕнчех,—заводра, цехра, колхозра, бригадăра, учрежденире—туса тăракан хаçатсем.

Вăхăтра тухакан, колхоз пурнăçĕнчи ыйтусене уçăк та тĕплĕн çутатса паракан стена хаçачĕ колхоз ĕçĕнче пысăк вăй пулса тăрать. Вăл хаçата колхозниксем чăннипех юратса вуласçĕ, ăна хисеплеççĕ, вăл коллектив умĕнче пысăк авторитетпа усă курать. Унăн витĕмлĕхĕ те вăйлă. Çавăн пек хаçат ĕнтĕ партипе советсен вырăнти органĕсен, колхоз руководителĕсен тивĕçлĕ помощникĕ, колхозниксен йышлă массине партипе правительство лартнă задачăсем çинчен каласа паракан, вăл задачăсене пурнăçа кĕртме пулăшакан вăйлă хĕçпăшал, большевикла агитатор, пропагандист тата организатор пулса тăрать.

— Пире «Ударник» стена хаçачĕ сахал мар пулăшать, ĕçри ситменлĕхсене эпир ун урлă пĕлсе, вĕсене вăхăтра пĕтерме тăрăшатпăр,—теççĕ Молгачкинăри (Çĕмĕрле р.) колхоз правленийĕн членĕсем.

«Ударник» хаçат вăйлă тырпулшăн кĕрешес ĕçре колхоза чăннипех пысăк пулăшу парать. Стена хаçачĕ иртнĕ çулти ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлăн вĕçтерме пулăшнă. «Августăн 2-мĕшĕнче А. Скворцова хăйĕн звенипе ĕç норминне 130 процент, утмăл çулхи колхозница Е. Козлова нормăна 136 процент тултарчĕ» тесе çырать пĕр номĕрте хаçат. Çав номĕртех вăл ĕçе тухман кăхалсене питлет. Кун пек примерсем «Ударник» хаçат ĕçĕнчен тата та нумай илсе кăтартма пулать. «Ударник» стена хаçачĕ иртнĕ çулта 24 номĕр тухнă, хаçата ялан çырса çăраканскен йышĕ 20—30 çын шутлать.

Çавăн пекех, Турханти «Комбинат» колхозра та «Правда» ятлă стена хаçачĕ йĕркеллĕ тухса тăрать. Стена хаçачĕ çуракине тухас умĕнех «Вăйлă тырпулшăн кĕрешер!» текен лозунгпа çĕлеме тытăннă. Малаллахи номĕрсенче вăл вăйлă тырпулшăн кĕрешесси колхозра мĕнле пынине конкретлă примерсемпе, фактсемпе кăтартса пынă.

Республикăри малта пыракан колхозсемпе тата ялхуçалăх ĕçĕнчи стахановецсемпе пĕрлех, колхозсенчи стена хаçачĕсем те иртнĕ çулта Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкинчи участникĕсем пулчĕç. Вăл хаçатсен шутне Вăрнар районĕнчи Молотов ячĕпе тăракан, Елчĕк районĕнчи «Осоавиахим» колхозсенчи стена хаçачĕсем кĕреççĕ. Выставка участникĕсем—стена хаçачĕсем хăйсен организаторла рольне чыслăн пурнăçласа пыраççĕ, вĕсем вăйлă тырпулшăн кĕрешес çĕрте çĕнĕ пуçарусем кăтартаççĕ.

Хальхи вăхăтра колхозсем çуракине хатĕрленсе пыраççĕ, вĕсем партин Пĕтĕм Союзри XVIII конференцине колхоз производствинче, вăйлă тырпулшăн кĕрешес çĕрте çĕнĕ çитĕнӳсем тунипе, çуракине йăлтах хатĕрленсе çитнипе кĕтсе илессишĕн ăмăртса ĕçлеççĕ. Ку ĕççенче стена хаçачĕсем хисеплĕ тата ответлă, вырăн йышăнаççĕ. Вĕсене вăхăтра тата кашни колхозрах кăларса тăмалла. Апла пулсан та хăшпĕр районсенче стена хаçат ĕçне хакламан руководительсем пур-ха.

Çĕрпӳ районĕнче миçе колхозра стена хаçачĕ тухнине те пĕлмеççĕ. Калас пулать, унта чылай колхозсенче стена хаçатсен ĕçĕ сӳнсе ларнă. Парти райкомĕ, çаврăн пекех, пуçламăш парторганизацисем те, стена хаçачĕсемпе сахал интересленеççĕ. «Емĕт» колхозра юлашки уйăхсенче стена хаçачĕ пĕр номĕр те тухман. Кунта партипе комсомол организацисем пур. Анчах колхозри парторганизаци стена хаçатне ертсе пымасть. Çавăн пекех, Кăшăркассинчи колхозри парторганизаци те стена хаçатне ертсе пымасть. Буденный ячĕпе тăракан колхозра 1940 ç. пĕр номĕр те тухман. Колхозри комсомол организаци стена хаçат ĕçĕпе нихăçан интересленмест.

Çак фактсем ВКП(б) Çĕрпӳ райкомĕ пысăк ĕçе—стена хаçачĕсене ертсе, куллен пулăшса пырас ĕçе манăçа хăварни çинчен каласçĕ. Ун пек фактсем çитти районсенчен те илсе кăтартма пулать.

Стена хаçачĕсене вăхăтра кăларса тăрасси, вĕсен ĕçри оперативлăхĕпе витĕмлĕхĕ парторганизацисем куллен ертсе пынинчен килет. Парторганизацисем стена хаçачĕ тавра рабселькорсен творчествине анлăн сарса пымалла, вĕсен пуçăрăвне пурнăçа кĕртме пулăшмалла. Парторганизацисен чи пирваях стена хаçат редакторĕсем пулса ĕçлеме ĕçре тĕрĕсленнĕ, политикăна пĕлекен, çав ĕçе юратакан тата çултаракан çынсене уйăрса лартмалла. Редколлегисене суйлама колхоз производствинче малта пыракансене—стахановецсене сĕнмелле. Стена хаçатсен ĕçне специалистсене, агитаторсемпе пропагандистсене, парти активне, рядовой коммунистсене, ĕççыннисен сăлака массине явăçтармалла.

Стена хаçачĕсене лайăхлатас çĕрте вĕсен ĕçĕсем çинчен парторганизаци бюровĕсенче, парти пухăвĕсенче ыйту тăртса сӳтсе-явни те пысăк вырăн йышăнса тăрать. Парторганизацисен стена хаçачĕсем çине «сиввĕн» пăхассине пăрахмалла, вĕсене ертсе пырассине тĕнренех лайăхлатмалла.

Паян эпир хамăр хаçатра «Стахановец» стена хаçат редколлеги членĕсен сыравне пичетлетпĕр: «Юлташсем, партин Пĕтĕм Союзри XVIII конференци ячĕпе колхозсенчи стена хаçачĕсен республикăри ăмăртăвне организацилесе, çав паллă куна производствăри çĕнĕ çитĕнӳсем тунипе кĕтсе илме колхозсене пулăшар тата Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкин участникĕсем пулма право илер», тесе çыраççĕ вĕсем хайсен çырăвĕнче.

Республикăри колхозсенче тухса тăракан стена хаçачĕсене пурне те «Стахановец» стена хаçачĕн паха сĕнĕвне йышăнса ăмăртăва хутшăнма сĕнмелле. Ăмăртăван тĕп задачи—стена хаçатсен ĕçне лайăхлатса, партконференцине çĕнĕ çитĕнӳсемпе кĕтсе илме колхозсене пулăшасси, хаçат ĕçне стахановецсене, вăйлă тырпул мастерĕсене йышлăн явăçтарасси пулса тăрать.

Кашни стена хаçачĕ партин XVIII конференцийĕ ячĕпе пыракан ăмăртăван организаторĕ пулмалла.

## Пысăк пахалăхлă продукцишĕн

Пирĕн çĕршыври промкоопераци артелĕсем ĕççыннисене куллен кирлĕ товарсем — сĕтел-пуканспе тытăнса кашăксем патне çитиччен, тепĕр тĕрлĕ каласан, хуçалăхра кирлĕ пулакан тĕрлĕрен япаласем туса кăлараççĕ. СССР Верховный Совечĕн Президиумĕ 1940 çулти июлĕн 10-мĕшĕнче пахалăхсăр тата комплектлă мар продукци кăларнăшăн ответлă пулассине çинчен Указ кăларчĕ. Унтанпа промкоопераци артелĕсенче пысăк пахалăхлă продукци туса кăларас тĕлĕшпе ĕçе çĕнетесе урăхлатма пысăк майсем пулнă.

Артельсенче туса кăларакан продукци пахалăхне тĕрĕслени çакна кăтартса паче: Йĕпреç, Канаш, Çĕмĕрле тата ытти районсенчи артельсен руководителĕсем СССР Верховный Совечĕн Президиумĕ кăларнă Указа пурнăçа кĕртсе пырассишĕн çителĕксĕр кĕрешеççĕ, вĕсем начар пахалăхлă продукци кăлараççĕ.

Йĕпреçри «Кооплеспром» артель август уйăхĕнче Вăрнарти кайăк-кĕшĕк комбинатне 15 тонна пахалăхсăр стружка ярса панă. Çĕмĕрлери «Труженик» артель Указ тухнă хыççăн шкулсем валли туса кăларнă парттăсенчен 50 проценчĕ брак пулнă, 78 пин тенкĕ убытка тӳснĕ.

Стандартсене пăсни тата продукци пахалăхĕ начар пулни ытти производствăсенче те, сăмахран, çăкăр пĕçернĕ, тăй-пушмак юсанă çĕрте те пулкалать. Хăшпĕр чухне брак продукци кăларакансене айăпламан тĕслĕхсем тĕл пулаççĕ. Йĕпреçри «Красный строитель» артель 1940 çулти плана тултараймарĕ. Начар пахалăхлă кирпĕч туса кăларать, хăшпĕр чухне брак продукци 0 процент таран пулать. Кирпĕчсене лабораторисенче тĕрĕслемесĕр сутаççĕ. Апла пулсан та Йĕпреç районĕнчи прокурор Мулгачев юлташ айăплисене ответ тыттарас тĕлĕшпе нимĕн те шутламан.

Шупашкарти кирпĕч завочĕ малтанхи çурçул хушшинче пахалăхсăр продукци кăларнă. Юлашки вăхăтра кирпĕч пахалăхĕ лайăхланни чылаях сиснĕ. Завод руководителĕсем продукци пахалăхĕшĕн чăн-чăн кĕрешӳ пуçарса янă.

Чăвашдревпромсоюз тата Чăвашпромсоюз правленисем хăйсен системине кĕрекен артельсене çителĕксĕр ертсе пынă. Чылай артельсенче продукци туса кăларассине чакарнă.

Промкоопераци артелĕсен пысăк пахалăхлă продукци кăларассишĕн СССР Верховный Совечĕн Президиумĕ июлĕн 10-мĕшĕнче кăларнă Указа тĕрĕс пурнăçа кĕртсе пырассишĕн тата брак продукци кăлараканскене хирĕç куллен-кун кĕрешсе пымалла.

**И МИЛИНДЕЕВ.**

## ХРОНИКА

Чăваш АССР Верховный Совечĕн Президиумĕ 1941 çулти январĕн 2-мĕшĕнче кăларнă Указпа Иван Петрович Петров юлташа Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи Вырăнти Топливо промышленноçĕн Управлени начальникĕн обязанноçĕсенчен хăтарнă.

Чăваш АССР Верховный Совечĕн Президиумĕ çав числарах кăларнă Указпа Александр Васильевич **Стуриков** юлташа Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи Вырăнти Топливо промышленноçĕн Управлени начальникĕпе пулса çĕлеме лартнă.

## Латвири ĕççыннисен суйлав умĕнхи пухăвĕсем

РИГА, январĕн 2-мĕш. (ТАСС). Республикăри хуласемпе ялсенче ĕççыннисен суйлав умĕнхи пухăвĕсем пулса иртеççĕ. Резекне хулине суйлавçăсемпе тĕл пулса каласа Союз Советне депутата суйлама тăратнă кандидат—Даугавпилсри чугунçул мастерскойĕнче ĕçлекен тимĕрçĕ Я. С. Смагар юлташ пынă.

Суйлавçă Ильин юлташ кандидат çинчен çапла каланă:

— Ян Станиславович Смагар,—тенĕ вăл,—хăй социализмлă тăван çĕршыва пĕтĕм чĕререн парăннине практикăллă ĕçре кăтартса панă. Совет власĕ туса хунă хыççăн Смагар юлташ нормăсене виçшер хут тултарса пырать, ĕç çине социализма пăхнин чăн-чăн примерне кăтартать. Вăл малта пыракан рабочи, ĕççыннисем хушшинче ăна хисеплеççĕ тата юратаççĕ.

Национальноçсен Советне депутата суйлама тăратнă кандидата—партин Рига хулинчи Московски райкомĕн секретарĕпе Яковлев юлташпа тĕл пулса калаçма 600 çын ытла пухăннă. Пухура тухса калаçакансем Яковлев юлташ çинчен çапла каланă: вăл — рабочи класс ĕçĕмĕн пĕтĕм вăйне хурăха кĕрешекен борец, çирĕп те чăтăмлă большевик, буржуаллă режим террорĕ ге, тĕрмесем те унăн кĕрешӳри ирĕкне пĕтерме пултарайман.

Пухăва пынисем резолюци йышăннă, вăл резолюцире çапла каланă:

— Январĕн 12-мĕшĕнче эпир пурте, пĕр çын пек пулса, суйлав етĕкĕсем патне кайăпăр, хамăран сасăсене коммунистсемпе беспартийнăйсен сталинла блокĕн кандидачĕсемшĕн парăпăр.

«Вэф» ятлă электротехнически заводри рабочисен суйлав умĕнхи пухăвне Латвири писательсемпе поэтсем пынă. Ю. Ванаг «Парти» ятлă сăвă, А. Григулас «Вечером в Москве» ятлă поэма вуласа панă. Çавăн пекех тата И. Леманис, В. Луко тата ытти писательсем те хăйсен произведенийĕсене вуласа панă.

## Производствăри çитĕнӳсен кĕнекисем

Нумай станцисенче, паровоз деповĕсенче тата чугунçул транспорчĕн ытти предприятийĕсенче социализмлă ăмăртура малта пыракансен пуçарăвĕпе производствăра партин Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕ ячĕпе хатĕрлекен парнесене çырмалли кĕнекесем тунă.

Омск-Пассажирская станцинче производствăллă парнесен кĕнеки çине çашти кунах çĕнĕ çитĕнӳсем çинчен çырса пыраççĕ. Кĕнекере составитель Тихонов юлташăн çитĕнĕвне палăртнă: вăл поездсене йĕркелес тĕлĕшпе 1 сехет те 25 минутра тумалли ĕçе 25 минут хушшинче туса пĕтернĕ. Çак кунсенче составитель Омельченко юлташăн çитĕнĕвĕ çинчен çырса хунă. Омельченко юлташ поездсене йĕркелес тĕлĕшпе панă заданине 243 процент тултарнă. Машинистсем производствăллă парнесен кĕнеки çине 15 çитĕнӳ çинчен çырса хунă. (ТАСС).

## Профсоюз билечĕсене улăштарас ĕç

ВЦСПС решенийĕ тăрăх, январĕн 2-мĕшĕнче профсоюз билечĕсене — 1940 çулта срок тухакан билетсене — улăштарма пуçланă.

Профсоюз билечĕсене улăштарас ĕç 1941 çулти мартăн 1-мĕшĕнчен пырать. СССР Союзĕнчи профсоюз членĕсен çуррине яхăнăшĕн билечĕсене улăштармалла. (ТАСС).

## ВКП(б) Мускав Хула Комитечĕн марксизм-ленинизм университетĕнче 8.800 çын вĕренет

МУСКАВ. ВКП(б) Мускав Хула Комитечĕн марксизм-ленинизм университетĕнче ВКП(б) историйĕ, философи, политэкономи, тĕнчери отношенисен историйĕ, ССР Союзĕнчи халăхсен историйĕ, пĕтĕмпĕлле истори тата литература тăрăх лекцисем вулама тытăннă.

Çак лекцисене пурĕ 8.800 çын итлет, вĕсем — партработниксем, хозяйственниксем, инженерсем, экономистсем, врачсем, педагогсем, юристсем.

## Çĕнĕ çулта тунă пирвайхи çитĕнӳсем

СТАЛИНГРАД. «Красный Октябрь» заводри мартеновецсем çĕнĕ çул пуçламĕшне стахановла, пысăк тухăçлă ĕçле палăртнă тунă. Çулталăк программине срокчен тултарнă 2-мĕш номерлĕ цех январĕн 1-мĕшĕнче талăкри заданине 111 процент тултарнă.

## Карачайри минерал шывсен çăлкуçĕсем

МИКОЯН-ШАХАР. Карачай автономлă облаçĕнче нарзанлă, сероводородлă тата минерал шывсен çăлкуçĕсене гупнă.

Минерал шывсем, тусем çинчи пăха климат çак вырăнсенче бальнеологически учрежденисем организацилеме май параççĕ. Теберда ушельнинче ӳпке чирĕнчен сыватмалли курорт тăваççĕ. Кунта 4 санатори, канмалли 4 çурт ĕçлеме пуçланă та ĕнтĕ. Вĕсенче пурĕ 1.400 койка.

## КĔСКЕН

Перекет кассисен 1940 çулти малганхи итогĕсене тунă. Совет Союзĕнчи ĕççыннисем 17 миллион çын хăйсен укçисене 40 пин перекет кассисене çурса перекетлеççĕ, 60 миллион çынна пăхăн государство заемĕсене çыранса илеççĕ.

Вăтам шутпа кашни уйăхра ĕççыннисене выляв укçине тата купонсем тăрăх 75 миллион тенкĕ тӳленĕ.

* * *

Измаил крепоçне илнĕренпе 130 çул гулташăн асăнса Çыхăну Халăх Комиссариачĕ çитес вăхăтра почта марксем кăларать. 15 пуслă марка çинче Измаил крепоçне штурмланинне, тепĕр марка çинче—вырăссен аслă полководецĕ А. В. Суворов портретне укереççĕ.

* * *

1940 çулти 11 уйăх хушшинче Горький Молотов ячĕпе тăракан автозавод рабочисемпе специалистсем панă рационализаторла сĕнӳсемпе производствăра усă курса 15 миллион тенкĕ укçа перекетленĕ.

* * *

1940 çулта, Хĕрлĕ Çар, Тинĕс-Çар Флочĕ тата НКВД çарĕн физкультурникĕсене шута илнессĕр, пĕр миллион çын ытларах, вăл шутран шкулта вĕренекенсем 300 пин çын ГТО çĕнĕ комплексĕ тăрăх нормăсем панă. Спортăн мĕнпур вăййисем тăрăх Совет Союзĕнче Пĕтĕм Союзри çĕнĕрен 178 рекорд тунă. Совет Союзĕнчи альпинистсем 46 çын 1940 çулта пысăк та çӳллĕ тусем çине хăпарас тĕлĕшпе 12 рекорд тунă, вĕсем пĕтĕм тĕнчипе паллă çитĕнӳсем пулса тăраççĕ

## Çамрăк выльăхсене лайăх кĕтсе илмелле

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Обществăллă выльăхсен шутне малалла хăвăрт ӳсересси çамрăк выльăхсене лайăх, тĕрес кĕтсе илиничен тата ăна лайăх пăхса ӳстернинчен килет. Кашни колхозăн, кашни фермăн çамрăк выльăхсене лайăх пăхса ӳстерессишĕн тăрăшмалла.

Красноармейский районра чылай колхозри фермăсем çак ĕçе тивĕçлипе тытăнман-ха. Çак хĕлре (килес 2 уйăхра) фермăсенче 500 çамрăк пăру, 1500 тутек, 4008 сысна çури кĕтсе илмелле.

Çак ответлăран та ответлă тапхăра, çамрăк выльăхсене кĕтсе илме, чылай колхозсем хатĕр мар. Хăшпĕр колхозсем обществăллă выльăхсене хĕл каçарма хатĕрленессине чылай ĕçсем турĕç. Анчах çамрăк выльăхсене кĕтсе илессине ку колхозсем пачах манса хăварнă.

Акă, сăмахран, Яманакри «Красное Сормово» колхозри сысна ферми районра малта пыракан фермăсенчен пĕри. Сыснасене хĕл каçарма хатĕрленес тĕлĕшпе чылай ĕçсем тунă. Ферма витисене пĕтĕмпех ăшăтса ситернĕ, кантăксене лартнă, ферма вити тавра тăпра купаланă, мачча çине улăм сарнă тата çĕнĕ вите тунă. Пĕр сăмахпа каласан, ферма сыснасене хĕл каçарма ниçаншинчен те лайăх хатĕрленсе çитнĕ. Анчах çамрăк сысна çурисене кĕтсе илессине пачах манăçа хăварнă. Нумай пулмасть вĕсем 15 сысна аминчен 165 сысна çури илнĕ. Çак çамрăк çурăсене ăшă вите çук пирки вăтă сыснасемпе пĕрлех усраççĕ. Колхоз председателĕ Лукин юлташ çурăсем пирки нимĕн те шутламасть-ха. Супарти «Партизан» колхозра та çамрăк выльăхсене начар кĕтсе илнĕ. Вĕсем пĕр сысна аминчен 5 çурă кăна илнĕ пулин те, вĕсене ăшă çĕре хупман пирки 2 çури шăнса вилнĕ. Çамрăк выльăхсем валли ятарласа тунă çуртсем кăмакисене халĕ те юсаман.

Иртнĕ çул сахал мар колхозсем çамрăк выльăхсене лайăх кĕтсе илейместĕр чылай тăкак курчĕç. Иртнĕ çулти фактсенчен кăçал çирĕп урок тумалла.

Çамрăк выльăхсене лайăх кĕтсе илме пирĕн кашни колхозрах çителĕклĕ условисем пур. Колхозсенче çамрăк выльăхсене кĕтсе илме тунă витисене халех ăшăтса çитерсе, çамрăк выльăхсене лайăх, тĕрĕс кĕтсе илсе ӳстерессишĕн тăрăшмалла.

**П. МАЙОРОВ.**

## ВКП(б) XVIII КОНФЕРЕНЦИЙĔ ЯЧĔПЕ ПЫРАКАН СОЦИАЛИЗМЛĂ ĂМĂРТУ

## ĂМĂРТУ САРĂЛАТЬ

СЕНТЕР. ВКП(б) Пĕтĕм Союзри XVIII конференцине пухасси çинчен пĕлтерсенех, колхозсенче 1941 çулта вăйлă тырпул туса илессишĕн социализмла ăмăртса ĕçлеççĕ.

Колхозниксем агротехникăна вĕренесси, стахановла шкулсем организацилесси те лайăхланса пырать.

Оринипăри «Хĕрлĕ Сормово» колхозра стахановла шкул организациленĕ, унта колхозниксем 35 çын агротехникăна вĕренет. Кашмаш ялсоветĕнчи «Свобода» колхозра 60 сехетлĕ программăпа стахановла шкул организациленĕ, унта 40 колхозник вĕренет. Ку ĕçе уйăмăнах участоксри агроном Киселев юлташ лайăх ертсе пырать. Шăпкар ялсоветĕнчи «Аврора» колхозра райсовет депутачĕ Соловьев юлташ тăрăшнине агротехникăна вĕренмелли кружок организациленĕ.

**Т. СОЛОВЬЕВ**

## Пирвайхи кун

Январĕн 2-мĕш—Шупашкарти предприятисем 1941 çулти производствăллă пĕрремĕш кунĕ пулчĕ. Çак кун рабочисем партконференци ячĕпе илнĕ обязательствăсене пурнăçа кĕртессишĕн большевикла кĕрешнине кăтартса паçĕç. Кунпа пĕрлех хăшпĕр предприятисем çĕнĕ çула начар хатĕрленни палăрчĕ.

«Красный молот» артель 1941 çулти плана тултарма чăннипех большевикла тытăнчĕ. Артель çĕнĕ çула лайăх хатĕрленнĕ. Рабочисем хăйсен нормисене ытлашшипех тултарчĕç.

— Яланах çакăн пек ĕçлесчĕ!—теççĕ рабочисем.

Чемодан тăвакан цех январĕн иккĕмĕшĕнчи заданине 190 процент тултарчĕ. Бригадир Магазинова юлташ çапла калать:

— Малашне те паянхи пекех лайăх ĕçлесен, партконференци ячĕпе илнĕ обязательствăсене ытлашшипех тултаратпăр.

Çĕвĕ цехĕнчи бригадир Иванов пĕр кунхи задание 125 процент, çĕвĕç Севрюгин—130 процент тултарнă.

— Пĕрремĕш кунăн итогĕсем пире савăнтараççĕ,—тет çĕвĕ цехĕн заведующийĕ Салмин.—Малашне те паянхи пекех ĕçлесен, пĕрремĕш кварталти плана февралĕн 15-мĕшне йăмпех тултарма пулчĕç. 11 тата 5-мĕш номерлĕ трактор бригадисенчи трактористсем тракторсемпе плугсене тиварь уйăхĕнчех юсаса пĕтерме йышăнчĕç.

Халĕ хăшпĕр трактористсем пухура

* * *

Çĕнĕ çула «Красный мебельщик» артель начар хатĕрленнĕ. Рабочисем хăйсем çине илнĕ обязательствăсене пурнăçласситĕн çине тăрса ĕçлеççĕ, ...чах вĕсен ĕçне нумай сăлтавсем чĕ...мантараççĕ.

Артельри чи лайăх стахановец, комсомолец Кулаков квартал планне ф... ралĕн 15-мĕшне 300 процент тултар... обязательство илнĕ. Анчах çĕнĕ çул пĕрремĕш кунĕнче ĕçе тытăнсан вăл чăрмавсемпе тĕл пулнă.

— Икĕ сехет ахаль тăтăм,—... вăл.—Материал шырарăм, тупрăм, ...махăна ĕç вырăнĕ патне йăтса ... гертĕм.

Çапах та Кулаков юлташ пуканс... валли 200 ура тунă, пĕр шкаф юса... пĕрремĕш кунхи нормăна икĕ хут ... ла тултарнă. Механически цехри ... милова, Зимина тата Молькова ... ботницăсем нормăна 115—120 проц... тултарнă.

—Вĕсем татах та лайăхрах ĕçл... чĕç,—тет бригадир Ефимов,—ан... цехра питĕ сивĕ. Рабочисен станок... уйăрăлса час-часах ăшăнмалла пул...

Артель руководстви цехсене ăшă... тĕлĕшпе ку тарифпа нимĕн те... ман. Çавна пула цехсенче ĕçлеме ... сук. Сĕтел-пуканспе çилĕмпе çып... тармалла, анчах ăшăтнă çилĕм çав... гах шăнса хытать.

Çакăн пек нечĕк япаласем ĕçре... хал мар чăрмантараççĕ. Вĕсене ... гермелле.

**СЕМЕНОВ**

## Производствăллă çĕклену

ЭЛЕК. Партин Пĕтĕм Союзри XVIII конференцине пухма йышăнни çинчен пĕлтернине Тури-Вылăри колхозниксем пысăк хавасланăпа кĕтсе илчĕç.

Конференци пухма йышăнни колхозниксен активлăхне çĕклерĕ. Ефимов ертсе пыракан бригада çитес çулта 150 пăтран кая мар тырă туса илме пулчĕ. Ефимов юлташ бригади 500 лав торф кăларчĕ. Бригадăри кашни колхозник пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ.

Колхоз кăсал 15 пин лав торф кăларса турттарать. Çакна янва... 15-мĕшчен турттарса пĕтерме йыш... нă. Паянхи куна 400 лав ытла ту... тарнă.

Вăрман касса хатĕрлеме 28 çын т... са кайнă. Уйрăмăнах Иван Бори... бригади лайăх ĕçлет. Вăл кулленхи нормине 150—170 процент тултар... Вăрман турттаракан бригада та хă... кулленхи ĕç нормине ытлашши... тултарать.

**Ф. Ката...**

## Тракторсене юсаса пĕтерме пулчĕç

КУКЕÇ. Çак кунсенче машинно-тракторнăй станцинчи трактористсемпе служащисен пĕрлехи пухăвĕ пулса иртрĕ. Пухура ялхуçалăх машинисене юсас плана тултарасси çинчен сӳтсе-явăрĕç.

Трактористсем ВКП(б) XVIII конференцийĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва хутшăнса, тракторсемпе плугсене юсамалли плана февралĕн 15-мĕшне йăмпех тултарма пулчĕç. 11 тата 5-мĕш номерлĕ трактор бригадисенчи трактористсем тракторсемпе плугсене тиварь уйăхĕнчех юсаса пĕтерме йышăнчĕç.

Халĕ хăшпĕр трактористсем пухура хăйсем çине илнĕ обязательствăсене пурнăçласситĕн çине тăрса ĕçлеç... 4-мĕш номерлĕ бригада 4 трактора ... трактора, 5-мĕш номерлĕ бригада ... трактортан 2 трактора, 8-мĕш номе... бригада 3 трактортан 2 трактора ... са пĕтерчĕç. Уйрăм ...ористсем хăйсен ĕç нормине куллен ...ртте тултарма пуçларĕç. Петров, Харит... ва хăйсен сумнĕ çирĕплетнĕ трак... сене юсаса пĕтерчĕç. Çавăн пекех ... хайлов, Иванова, Амурцева, Ку... юлташсем ĕç нормине ытлашши... тултарса пыраççĕ.

**П. Никити...**
**С. Гаврил...**

## Черняев бригади тракторсене юсаса пĕтернĕ

ÇЕРПУ. (Хамăр корреспондентран). Декабрь уйăхĕнче ялсовет председателĕсен, çулйĕр бригадирĕсен, çулйĕр мастерĕсен районри канаплăвĕ пулса иртрĕ. Кунта çулйĕр строительствин 1940 çулти итогне тата 1941 çулти задачăсене сӳтсе-явăрĕç.

Ĕççыннисем çулйĕр строительствине ĕçленине укçа шучĕне илсен, кăçал районĕпе 523.807 тенкĕлĕх ĕç тунă. Çак шутран Çĕрпӳрен чугунçул станцийĕ патне пыракан çула тума 315.549 тенке ларнă.

Пĕрремĕш Вăрманкасси ялсовечĕ (исполком председателĕ Никифоров юлташ) çулйĕр строительствин çулталăк планне 122 процент ытла тултарнă. Шуртавăш, Нĕрĕш, Анатри Кипекçе, Тивĕш ялсовечĕсем те ку тĕлĕшпе малта пыраççĕ. Район çĕнĕ çулсем тăвас тĕлĕшпе кашни çулах çитĕнӳ туса пырать. Çапах та ялсоветсем, колхозсем, çулйĕр бригадисем пурте тивĕçлипе ĕçлеççĕ теме çук-ха. Иккĕмĕш Вăрманкасси, Юлаш ялсовечĕсем, «Красный пахарь», «Красное знамя» колхозсем çулйĕр строительствин планне çуррине те тултарман. Пĕтĕмпе илсен район плана 94 процент тултарнă.

# Чăваш ĕçхалăхĕ XIX ĕмĕрте чиркӳпе духовенство пусмăрне хирĕç кĕрешни

Патша Российĕнче «рабочисемпе хресченсем çинче исправниксен, урядниксен, жандармсен, полицейскисен, стражниксен пысăк çарĕ тăнă; вĕсем ĕçсыннисене, эксплоатациленекенсене хирĕç пынă, патшана, капиталистсене, помещиксене сыхласа тăнă» («ВКП(б) историйĕн кĕске курсĕ», чăвашла изд., стр. 6). Çавăн пекех патша Российĕнче чиркӳ те, государство аппаратĕн пĕр пайĕ пулса, патшапа помещиксене тата капиталистсене сыхласа тăнă. Православнăй тĕн патша Российĕнче—пуçласа тăракан тĕн пулнă. Патшана православнăй тĕнĕн пуçлăхĕ тесе шутланă. Православнăй чиркӳ пит анлă правасемпе тата привилегисемпе усă курнă, вăл пит те пысăк помещик тата капиталист пулнă; чиркӳ аллинче миллионшар десятин çĕр, промышленность предприятийĕсемпе суту-илӳ заведенисем пулнă, чиркӳ пит пысăккăн суту-илӳ туса тăнă.

Патша правительстви чиркӳпе духовенствăна тытса тăма кашни çулленех çалăх укçинчен вуншар миллион тенкĕ уйăрса панă. Çапла 1912 çулта пĕтĕм Российăра чиркӳ валли 43 миллион тенкĕ укçа панă, çак укçаран пĕр миллион тенке яхăн Хусан губернăлли тивнĕ. Кунсăр пуçне тата духовенство хăй те халăхран кашни çуллех çĕршер пин тенкĕ укçа, пит нумай тата ытти япаласем те пуçтарнă.

Православнăй чиркӳве патша самодержавийĕ полицейскисен вăйăпе сыхланă. Христианство тĕнне пăрахса пăх тĕне куçакансене патша ĕлĕ хытă айăпланă. Çавăн пек, христианство тĕнне пăрахса урăх тĕнелисем XIX ĕмĕрте Чĕмпĕр губернин Пăва уездĕнчи тата Хусан губернин Çĕрпӳ уездĕнче пурăнакансем хушшинче чылай пулнă. Çавăн XIX ĕмĕрте Хусанти духовнăй консистори чăвашсемпе марисене тата теприсене сыхласа тăнă. Ун пек сынсене нумайĕшне пĕр тата ытти тĕнелисене инçетри монастырьсене «çулăх каçарттарса» пурăнтарнă.

Патша Российĕнчи шкулсенче духовно хуса пулса тăнă. Пур сынсене те йăлисене туса пыма хушнă тумасанах «политика тĕлĕшпе йăксăр» сынсен шутне кĕртнĕ. Чăлĕсенче вара XX ĕмĕрченех десятксисем пулнă, вĕсем чăваш енĕсене чиркĕве çӳреме, ăраснах типĕ чухне ураса тытма каймашăвалланă. Вилнине, çуралнине, çемье мăшăрланнине те чиркӳре ирмалла пулнă. Ачасене пурне те купăсне вара этем вырăнне те хуçа каларнă указ тăрăх çулăх каçарттарма поп патне çӳренине

# Колхозсэнчи стена хаçачĕсен республикăри ăмăртăвне организацилеç

## „Стахановец" стена хаçат редколлеги членĕсен çырăвĕ

Пирĕн Аслă-Чуллăри «Прогресс» колхоз иртнĕ 1940 çулта ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлăн вĕçлерĕ. Стахановла агротехникăна пурнăçа кĕртсе тата ялхуçалăх ĕçĕсене пурне те вăхăтра туса пырса колхоз вăйлă тырпул туса илчĕ. Ыраш гектартан — 16,6 центнер, урпа—19,6 центнер, пĕтĕм культурăсем тăрăх вăтамран 14 центнер тĕштырĕ илнĕ. Комсомолец М. Антонов ертсе пыракан бригада вăтамран кашни гектар çинче 16,3 центнер тĕштырă пуçтарса кĕртрĕ. Çавăн пекех, III-мĕш бригада та (бригадирĕ Андреев юлташ) малта пырать.

Уйри пĕтĕм тырпула колхоз 13 кун хушшинче пуçтарса кĕртрĕ. Авăн çапас ĕçсене те вăхăтра вĕçлерĕ. Çаксем государство умĕнчи обязательствăсене вăхăтра тата пĕтĕмпех тултарма май пачĕç.

Тырпулсене тирпейлĕ пуçтарса кĕртсе государствăна парса татнă хыççăн, колхоз тивĕçлĕ фондсене йăлтах кирлĕ таран туса хучĕ.

Общественнăлă хуçалăх та кашни çулах ӳссе çирĕпленсе пырать. Халĕ пирĕн колхозăн 5 ферма, фермăсем валли вылăхсем илсе çитернĕ, вылăх апачĕсем, витесем çителĕклĕ. Пĕр çул хушшинче кăна лаша витине тунă, çĕнĕрен чăх-чĕп тата сысна фермисем валли çуртсем туса лартнă. Сысна ферми валли çурт тунă çĕре колхоз 20.000 тенкĕ хывнă.

Колхоз икĕ гектар çинче сад ĕрчетрĕ, ку ĕçе малашне те сарсах пырать. Колхозăн двигательне ĕçлекен арман, кĕрпе арманĕ тата тăватă пĕве пур. Пирĕн халь клуб, библиотека, туллимар вăтам шкул, трахпункт, ветеринари пункчĕ ĕçлеççĕ.

Колхоз производствинче çĕнĕ çынсем — стахановецсем ӳссе çитĕнчĕç. Машиновед П. Моисеев уборка вăхăтĕнче кулленхи нормăна яланах 125 процент тултарса ĕçлерĕ. Çамрăк колхозник Ф. Афанасьев Хĕрлĕ Çара кайичченех колхозра çавтери паха примерсем кăтартса, кулленхи ĕç нормине 200—220 процент тултарса ĕçлерĕ, халĕ вăл çар шкулĕнче вĕренет.

Колхозниксен тĕрĕ ĕçĕ пирĕн колхоза районра малта пыракан колхозсенретне тăма, республикăри Хисеп хăми çине кĕме пулăшрĕ. Кунта ăна колхозра йĕркеллĕ туса тăракан «Стахановец» стена хаçачĕпе бригадăсенчи хаçатсем пысăк пулăшу пачĕç. Пирĕн «Стахановец» стена хаçат колхозри стахановецсен, ялхуçалăх мастерĕсен паха опычĕсемпе ĕçĕсем çинчен калаçманипе пĕрлех, колхозниксене вăйлă тырпулшăн кĕрешме организацилеç пысăк вăй пулса тăчĕ.

Колхозниксем хăйсен хаçатне юратса вуласçĕ, вĕсем хăйсем хаçат ĕçне активлăн хутшăнма тытăнчĕç. Хаçата çырса тăракансен хисепĕ 20 çинтан иртет. «Стахановец» хаçат ялхуçалăх артелĕ умĕнче тăракан ыйтусене вăхăтра çутатса, вĕсене пурнăçа кĕртес ĕçре правленине пулăшать. Сăмахран, колхозăн лаша кӳлмелли хатĕрсем çителĕксĕр пулнă. Стена хаçачĕ çак ыйтăва хăйĕн страницисенче лартса паша кӳлмелли хатĕрсемпе колхозри транспорта лайăх йĕркеleме пулăшнă. Çавăн пекех выльăх апачĕсем çителĕклĕ хатĕрлес ĕçре те хаçат колхоза пысăк пулăшу панă. Ку ыйтăва вăл июнь уйăхĕнчех пуçарнă.

Хальхи вăхăтра пĕтĕм çĕршыв парти Пĕтĕм Союзри XVIII конференцине хатĕрленет. Конференцине хатĕрленнĕ май производствăллă çĕнĕ çĕкленĕвĕн хăватлă движенийĕ сарăлса кайрĕ.

Пирĕн колхоз членĕсем çав движение хутшăнса çĕнĕ çитĕнӳсемшĕн ăмăртăва тухрĕ, çуракине лайăх хатĕрленес тĕлĕшпе — вăйлă тырпулшăн пĕтĕм вăл хурса ĕçлеме тытăнчĕ. Колхоз çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе малланхи ĕçĕсене турĕ те ĕнтĕ. Вăрлăхсене пĕтĕмпех сортласа хунă, 66 гектар çинче юр тытнă, уя 1800 лав тискĕ кăларнă, ялхуçалăх машинисемпе çаса типтерĕлĕ пуçтарса лартнă, лаша кӳлмелли хатĕрсемпе колхоз транспортĕ те юсавлă.

Колхозниксем хĕллехи вăхăтпа агротехникăна вĕренес çĕрте усă кураççĕ. Колхозри бригадиресем, звеноводсем тата стахановецсем пурĕ 35 çын ялхуçалăхĕнче малта пыракансен паханчĕсене вĕренме тытăнчĕç.

Çуракине чи лайăх хатĕрленессишĕн, партин XVIII конференцине çĕнĕ çитĕнӳсемпе кĕтсе илессишĕн тата Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкин участникĕ пулма тивĕç илессишĕн пыракан ăмăртура колхозри стена хаçачĕсем ответлă тата хисеплĕ вырăн йышăнаççĕ. Вĕсем партин XVIII конференци ячĕпе пыракан социализмлă ăмăртăвăн организаторĕсем пулмалла.

Эпир, «Стахановец» стена хаçат редколлеги членĕсем, ЦК ВКП(б) партин Пĕтĕм Союзри XVIII конференцине пуласси çинчен пĕлтернине сӳтсе-явăп кысçăн партин XVIII конференцийĕ ячĕпе пыракан социализмлă ăмăртăва сутшăнса стена хаçатне вăхăтра кăларса тăма, ялхуçалăхĕнче малта пыракансен паха опычĕсене тĕплĕн сутатса пыма пулатпăр.

Республикăри колхозсенче тухса тăракан стена хаçачĕсен редколлегисене пурне те пирĕн пример тăрăх ĕçлеме сĕнетпĕр.

Юлташсем, партин Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕ ячĕпе колхозсенчи стена хаçачĕсен республикăри ăмăртăвне организацилесе, çав паллă çуна производствăра çĕнĕ çĕнтерӳсем кунипе хĕтсе илме колхозсене пулăшар тата Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкин участникĕсем пулма правослессишĕн кĕрешер!

**«Стахановец» стена хаçат редакторĕ С. ЛАЗАРЕВ.**
**«Стахановец» стена хаçат редколлеги членĕсем: Г. ЯКОВЛЕВ, Д. ВЛАДИМИРОВ, М. ВАСИЛЬЕВ.**
**Колхозри комсомол комитечĕн секретарĕ Ф. ЛЕОНТЬЕВ.**

Красноармейский район.

## Культура ӳсĕмĕсем

ЕЛЧЕК. Патрекеевăнчи «Осоавиахим» колхозра вĕреннĕ çынсем тата квалификацийлĕ кадрсем çулран çулах ӳсе пыраççĕ. Колхозра клуб, вулавăшĕ çурчĕ тата библиотека туса лартнă. Колхозниксен килĕсене радио кĕртнĕ.

Халиччен пуçламĕш шкул кăна пулнă. Халĕ туллимар вăтам шкул туса лартрĕç. Çак шкулта 11 учитель ĕçлет, 260 ача вĕренет.

Колхозра тăван çĕршыва сыхлама юрăхлă çамрăксем çитĕнчĕç. Хĕрлĕ Çар ретĕнче 41 çын пурăнать, вăл шутран виççĕшĕ лейтенантсем.

Ялхуçалăх ĕçĕнче ĕçлекен кадрсем те ӳссех пыраççĕ. Колхозра трактористсем 8, комбайнерсем 4, механиксем 4 пур. Кунсăр пуçне учительсем 28 çын тата виçĕ инженер. Колхозăн çамрăкĕсем нумайĕшĕ аслă шкулсенче вĕренеççĕ.

**А. Дудкин.**

▲ СОВЕТСКОЕ. Тури Ачакри «Крестьянская газета» колхозра юлашки сулсенче паха çитĕнӳсем тунă. Колхозра 400 çын вырнаçмалăх клуб тунă. Кунсăр пуçне библиотека, фельдшер пункчĕ тата радио пур.

Колхозра аслă шкулсенчен вĕренсе тухнă кадрсем çитĕнчĕç. Çак шутран агрономсемпе зоотехниксем 14, врачсем 4, Хĕрлĕ Çар командирĕсем 7 çын.

**Я. Суворов.**

# Ĕççынни депутачĕсен районри Совечĕсем çумĕнчи яланлăх комисси председателĕсен канашлăвĕ

Çак кунсенче Шупашкарта, Советсен Сӳртĕнче, ĕççынни депутачĕсен районри Совечĕсем çумĕнчи яланлăх комисси председателĕсен канашлăвĕ пулса иртрĕ. Унта районри Советсем çумĕнчи яланлăх комиссисем 1940 çула тунă ĕçсене пăхса тухрĕç тата яланлăх комиссисем умĕнче тăракан задачăсем çинчен сӳтсе-явăрĕç.

Чăваш АССР Конституцийĕн 51-мĕш статьи тăрăх, ĕççынни депутачĕсен район, хула, поселок тата ял Советĕсем хăйсен территорийĕнче культурăлла-политикăлла тата хуçалăхлă строительство ĕçне ертсе пыраççĕ, вырăнти бюджета тăваççĕ, хăйсене пăхăнса тăракан управлени органĕсен ĕçĕсене ертсе пыраççĕ, государствăри йĕркелĕхе сыхласа тăраççĕ, çĕршывăн оборона хăватне вăйлатма пулăшаççĕ, законсене пурнăçа кĕртсе пыраççĕ тата граждансен прависене сыхлаççĕ.

Çаксене пурнăçлас ĕçре пулăшса пыма ĕççынни депутачĕсен вырăнти Совечĕсем çумĕнче яланлăх комиссисем суйланă. Çакна май вырăнти Советсен ĕçне ĕççынисем сарлакан хутшăнса пыраççĕ. Чăваш республики çинче вырăнти Советсем çумĕнчи яланлăх комиссисен членĕсем пурĕ 3673 çын шутланаççĕ. Вăл комиссисем хăйсен ĕçĕнче активпа сыхăнса тăраççĕ. Комиссисенче хĕрарăмсем те нумай, вĕсем комиссисене пысăк пулăшу парaççĕ.

Активпа таччăн сыхăнса ĕçленипе яланлăх комиссисем пысăк çитĕнӳсем турĕç. Советсем хăйсен умĕнче тăракан ĕçсене мĕнле пурнăçа кĕртсе пынине массăллăн тĕрĕслесе, çитменлĕксене çийĕнчех пĕтерсе пыма, çавăн пекех тата кирлĕ ыйтусене сессисенче вăхăтра сӳтсе-явма пулăшнă.

Комсомольский район Совечĕ çумĕнче тăватă яланлăх комисси ĕçлет. Комиссисем план тăрăх ĕçлесе пынине пылай çитĕнӳсем тунă.

Ялхуçалăх комисси председателĕ Сидоров юлташ ĕç планĕсене вăхăтра пурнăçласа пырать. Комисси МТС тата колхозсен ĕçĕсене яланах тĕрĕслет. Уйрăмăнах ялхуçалăх ĕçĕсене мĕнле пурнăçланине тата общественнăлă ыльăх-чĕрлĕх ĕрчетес енĕпе мĕнле ĕçленине тĕплĕн тĕрĕсленĕ, çитменлĕксене çийĕнчех пĕтерме пулăшнă.

Ялхуçалăх комиссийĕ суйлавçăсем çине хăварнă наказсене вăхăтра пурнăçласа пынине Комсомольский район республикăра мала тухнă. Çурăн тата кĕрхи ака ĕçĕсене, тырпулсене пухса кĕртессине, авăн çапассине вăхăтра пурнăçланă. Кĕрхи çĕртмене 1940 çулти октябрĕн 19-мĕшĕнче республикăра ăна малтан 100 процентĕпех пурнăçланă. Çакăн пек паха ĕçсем тунăшăн район республикăра Хисеп хăми çине кĕртнĕ.

Бюджет комиссийĕ те (председателĕ Маков юлташ) аван ĕçленĕ. Район бюджетне сессипе пăхса тухичченех малтан комисси хăйĕн ларăвĕнче пăхса тухнă. Бюджета комисси тĕплĕн пăхнă, çакăн хыççăн, райсоветăн бюджечĕ доходсемпе расходсем тăрăх 387 пин тенкĕ ытларах пулма кирлине палăртнă. Комисси бюджета мĕнле пурнăçланине яланах тĕрĕслесе тăрать.

Сĕрпӳ районĕн Совечĕ çумĕнчи культурăпа сутăç комиссийĕн председателĕ пулса Авксентьев юлташ ĕçлет. Планпа пăхнă ĕçсене пĕркеллĕ туснă. Вăсем 8 шкул тата детгородок ĕçĕсене тĕрĕсленĕ. Тĕрĕслева активлăн явăстарнă. Шкулсенче палăрнă çитменлĕксене райсовет исполкомĕнче сӳтсе-явнă. Çакăн хыççăн шкулсенче воспитани парас ĕç лайăхланнă.

Ишлей район Совечĕн вырăнти промышленность енĕпе ĕçлекен комиссийĕ районра вырăнти промышленноçа анлăн сарса пырас тĕлĕшпе усăллă сĕнӳсем панă. Комисси районра тăмран авăт-сапа туса кăлараканпа, шăнçу тăпатакан тата тир тăваканпа мастерскойсем тума кирли çинчен кăтартса панă.

Çак паха сĕнӳсене район Совечĕ пурнăçлама тытăннă. Район центрĕнче ремонтно-механически мастерской ту ма пуçланă. Чăкăнар ялсоветĕнче тăмран чăшăк-чӳлмексем туса кăлараканан мастерской туса та пĕтереççĕ ĕнтĕ.

Сĕрпӳ хула Совечĕн суту-илӳ комиссийĕ (председателĕ Ефимов юлташ) хулари суту-илӳ организацисем тата стол-вăйсен ĕçне тĕрĕсленĕ. Тĕрĕсленĕ хыççăн горпо столовăйĕнчи пата пахалăхсăр пĕçерине тата апат-сакне ӳстерсе сутнине палăртнă. Пĕр ремĕш блюдăшăн 97 пус, иккĕмĕш блюдăшăн 1 тенкĕ те 2 пус ытлашши илнĕ пулнă. Çакăн çинчен вĕсем çийĕнчех хула Советне пĕлтернĕ. Хула Совечĕ асăннă çитменлĕксене пĕтерме пăхăннă.

Анчах хăшпĕр районсенче яланлăх комиссисем хăйсен ĕçĕсене тивĕçлипех туса пыма тытăнман-ха. Вăрмар, Куславкка, Сĕмĕрле, Йĕпреç, Вăрнар районĕсенче комиссисем пачах та ĕçлемеççĕ. Асăннă районсем ялхуçалăх ĕçĕсене пурнăçлас, государство умĕнчи парăмсене вăхăтра татас, выльăх чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе республикăри яла юлса пыраççĕ. Районри Советсем çумĕнчи яланлăх комиссисем те ĕçе кирлĕ пек пулăшу памаççĕ.

Канашлура хăшпĕр яланлăх комиссисем хăйсен ĕçĕсене тĕплĕн ăнланса илменни палăрчĕ. Яланлăх комиссисен хăйсен ĕçне актива анлăн кăвăртарса пымалла, ялхуçалăх, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес, шкулсен, больницăсен, вырăнти промышленность, суту-илӳ организацисен ĕçĕсене яланах тĕрĕслесе тăмалла. Тĕрĕсленĕ хыççăн район, хула, ял Советсен исполкомĕсене пĕлтермелле. Исполкомсем комиссисен ĕçăратнă ыйтусене вăхăтра пурнăçа кĕртсе пымалла. Анчах çакна хăшпĕр комиссисем, çавăн пекех исполкомсем те тĕплĕн ăнланса илмен.

Канашлура Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн председателĕ Андреева юлташ тухса каларĕ. Вăл вырăнти Советсем умĕнче тăракан задачăсем çинчен, яланлăх комиссисен çак ĕçсене пурнăçлама Советсене яланах пулăшса пымалли çинчен сăмах тăвĕ.

Андреева юлташ Вăрмар районĕнчи яланлăх комиссисем кирлĕ пек ĕçленинине тата район пур енчен те ая юлса пынине палăртрĕ. Вăрмар районĕ ыльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана çитĕкĕсĕр пурнăçласа пырать. Уçа-тенкĕ пухассишĕн тивĕçлипех ĕçлемен, бюджета та 62,3 процент кăна пурнăçланă.

Шкулсен ĕçĕнче те пысăк çитменĕвсем пур. Хутла пĕлменнисене вĕрентме тытăнманпа пĕрех, вĕсене вĕренĕве çурринче те явăстарман. Сывлăха сыхлас тĕлĕшпе те начар ĕçлеçĕ. Трахом чирĕпе вĕрешесси уйрăмăх юлса пырать.

Канашлура яланлăх комиссисем пĕрĕрин ĕç опычĕсемпе тĕплĕн паллашăç. Вĕсем хăйсем умĕнче тăракан ыйтусене йĕркеллĕ пурнăçласа пыма пулчĕç.

## Техничкăсем трактор ĕçне вĕренеççĕ

ЭЛЕК. Çак кунсенче МТС çумĕнче район центрĕнчи учрежденисенче ĕçлекен техничкăсем хăйсен квалификацине хăпартас тĕлĕшпе трактор ĕçне вĕренме тытăнчĕç.

Халь тракторсем курсĕнче 28 хĕрача вĕренет. Çавнашкалах производствăран уйрăлмасăр трахсестра пулма 22 хĕрача вĕренеççĕ.

**Ф. Катей.**

# Пахча-çимĕç мастерĕ

Хуларан кăнтăр енче, тӳрем вырăнта пысăк мар çуртсем лараççĕ. «Авангард» артелĕн пахчи вырнаçнă кунта. Çуртсем-теплицăсем. Вĕсенче кашни çулах хĕллехи вăхăтра сухан, помидор, хăяр ешĕрсе ӳсеççĕ. Халĕ Канашри столовăйсенче пулакан çын çав теплицăсенче ӳснĕ симĕс сухана кулленех курма пултарать.

— Хĕллехи вăхăтра эпир,—каласа парать Владимир Федорович,—хулана 10 тонна симĕс сухан пама пултаратпăр. Май уявĕ тĕлне хăяр тата кăшт каярах помидор пулать. Калчасем лаптăк ӳсеççĕ.

Тăватă çул ытла ĕнтĕ ĕçлет Владимир Федорович Виншу юлташ артелĕн пахчинче. Сахал мар паха ĕçсем тунăвăл тăватă çул хушшинче. Унăн ĕçĕсем çинчен халĕ хулара кăна мар, районра та пĕлеççĕ. Нумай пулмасть пирĕн Ачча ялсовет Канашран 20 километрта ларать. «Авангард» артелĕн пахчи çинчен унта та нумайĕшĕ пĕлеççĕ. Артель пахчи хăйĕн паха ĕçĕсемпе чапа тухнă. Унăн ĕçĕсем çинчен часах республикăра та пĕлĕç.

Пахча-çимĕç ĕрчетекенсем пурте пĕр техникăна усă кураççĕ, пĕр пек методсемпе ĕçлеççĕ теме пулать. Çĕре ремонтеççĕ, сортлă вăрлăхсем акаççĕ, çалчасене лайăх пăхса ӳстерме тăрăшаççĕ. Владимир Федорович ĕçĕнче те çав техника тата çав методсем тĕп вырăнта тăраççĕ. Анчах унăн хăшпĕр уйăмлăхсем пур. Вăл, пуринчен ытла, çĕллехи вăхăтра тата маларах ӳсме тултаракан пахча-çимĕçсене пысăк вырӑна хурать. Хĕллехи вăхăтра симĕс сухан туса илни ĕççынисемшĕн питех паха та кирлĕ ĕç пулса тăрать. Ана Владимир Федорович лайăх ăнланса илнĕ. Вăл хĕллехи вăхăтра симĕс сухан ӳстерме питех йывăр марри тата ăна тума укçа-тенкĕ те ытлашши нумай кирлĕ пулмании çинчен те лайăх ĕлет. Пысăк мар теплицăсенчех тата-сыпписĕр симĕс сухан туса илме пулать.

Çакна тăватă халĕ Владимир Федорович. Вăл ноябрь уйăхĕнче ещĕксем çине сухан лартса хăварнă. Ещĕксене теплицăсенче пĕр-пĕрин çине купаласа лартнă. Вырăн нумай кирлĕ мар. Пысăк мар теплицăрах нумай ещĕксем вырнаçтарма май пур. Кун хыççăн та сухан хăй тĕллĕнех ӳсесси çине шанса тăма юрамасть. Вăл мĕнле ӳснине ăнасах тăрса, кирлĕ вăхăтра ăна çумăр çителĕклĕ памалла. Мĕншĕн çавăн пек тума кирли çинчен Виншу юлташ çапла каласа парать:

— Сухана шăтнă чухне çутă нумай кирлĕ мар. Çавăнпа сухан лартнă ещĕксене малтанах аяла лартма юрать. Уснĕçемĕн ăна çутă ытларах памалла. Вара ещĕксене çӳлерех те çӳлерех улăх тарса пымалла. Çапла татти-сыпписĕр сухан пуçтарса кĕретпĕр.

Теплицăсенче хальхи вăхăтра помидор, хăяр калчисем ӳсеççĕ. Вĕсем хăйсен çимĕçĕсене ир параççĕ. Кун пирки иккĕленмелле мар. Иртнĕ çулта артель ир туса илнĕ хăяр Канаш хулине çеç мар, Шупашкара та тăратнă.

Пахча халĕ пурĕ 5 гектар ытларах çĕр лаптăкĕ йышăнса тăрать. 1939 çулта унăн çĕр лаптăкĕ сахалтарах, виçĕ гектар çурă кăна пулнă. Купăста, хăяр, редис, помидор тата ытти нумай культурăсем лартса тунă. Тухăçлă пулнă вĕсем. Пĕр гектартан купăста 366 центнер, дыня-арбус 240 центнер пуçтарса кĕртнĕ. Ытти культурăсем те лайăх пулнă. Артель 1939 çулта туса илнĕ пахча-çимĕçсене 85.578 тенкĕлĕх сутнă. Çак çулти тухăçлă ĕç Владимир Федорович Виншу юлташа Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкин участникĕ пулма тивĕç панă.

Владимир Федорович ĕмĕтленме юратать тата ĕмĕтленме пĕлет. Унăн ĕмĕчĕсем пурнăçна, кулленхи практикăлă ĕçне сыхăнса тăраççĕ. 1940 çулта пахча-çимĕçсен тухăçлăхне тата ытларах ӳстерме 1939 çултах шутласа хунă пулнă. Шухăшсене пурнăçа кĕртнĕ вăл. 1940 çулта гектартан 487 центнер купăста туса илнĕ. Ирхи купăста, вăтамран, гектар çинче 697 центнер пулнă. Ку—рекорд патне сывхарать. Дыня-арбуз гектартан 280 центнер, хăяр 314 центнер илнĕ. Пĕтĕмпе 195984 тенкĕллĕх пахча-çимĕçсем пухса кĕртнĕ Çапла Владимир Федорович çитес çул та та Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкин участникĕн кандидачĕ пулма тивĕç илчĕ.

* *

Иртнĕ çулта Владимир Федорович Виншу Мускавра, ялхуçалăх выставкинче пулнă. Вăл унта аслă Совет çĕршывĕнчи пахча-çимĕç мастерĕсен ĕçĕсемпе, опычĕсемпе тĕплĕн паллашнă. Выставкăри опытсем нумай çĕнĕ ĕмĕтсем панă Виншу юлташа. Халăвăл хăйĕн шухăш-кăмăлĕсене: çĕнĕ çулта тата пысăкрах çитĕнӳсем тума майсем пурри çинчен, кăçалхинчен лайăхрах ĕçлеме хатĕрленни çинчен пысăк хаваслăхпа каласа парать. Çитĕ çулта вăл ирхи купăста гектартан 9 центнер, хăяр 500 центнер, помидор 525 центнер туса илме шутлать. Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставки уçăлтĕле Чăваш республикин залĕнче к тартма томат, хăяр, купăста, редис т та ытти сене те тăратма пулать.

**М. ТИТОВ.**
**КАНАШ. (Хамăр корр.).**

# Бригада стахановла ĕçлет

1940 çулăн пуçламĕшĕнче манăн бригадăра ĕçлекенсем хăйсем çине пĕрре чĕм квартал планне 130 процент тултарма обязательство иличчĕ. Çакна пурнăçлас тесе бригадири рабочисем кушшинче социализмлă ăмăрту анлăн çарăлса кайрĕ. Эпир ĕç вăхăчĕпе тулли усă курма пуçларăмăр, дисциплина çирĕпленчĕ. Çаксем вара пире чăнах хамăр сăмаха тивĕçлĕн пурнăçлама май пачĕç—манăн бригада квартал планне 140 процент тултарчĕ.

Тунă çитĕнӳ пире çĕнĕ вăй пачĕ. Эпир хамăра панă плана ялан ирттерсе тултарма пуçларăмăр. III-мĕш квартал планне 141 процент тултартăмăр, IV-мĕш кварталта та япăх мар, материалсем çителĕксĕр пулнă пулсан та, плана срочсен тултартăмăр.

Çак результатсене кура хăшпĕрисем пирĕн ĕçрен тĕлĕнме пăхаççĕ. «Мĕнле ĕçлетĕр вара эсир?» теççĕ вĕсем. Шутласассăн ку ыйту кулăшла пек туйăнать. Мĕнех вара пирĕн ĕçрен тĕлĕнмелли! Ĕçлессе ытти пекех, кашни ун 8-шар сехет ĕçлетпĕр. Ман шутпа пĕтĕмпех ĕç вырăнне тĕрĕс организацилесе, тепре çӳлелле тăсăлакан тайăпа асран тухас çук.

Çутă Уссури хĕррипе çын çӳллĕш хăлаçланса ӳсекен упасаррисем, йĕрки-йĕркипе шурă хурăнсем курăнса каяççĕ.

Хуллен йывăççене сирсе сукмак тăрăх утатăп. Кăнтăра çывхаракан хĕвел хĕрхенмесĕр шевлине сапалать. Анчах йывăççем айĕпе пынă чух кунта сулхăн та уçă. Инçех мана пĕр сăрт хуран тĕмеленсе ларать. Хăвăрттăн юхса выртать ун çумĕпе Уссури шывĕ. Амурпа пĕрлешессĕн васкать вăл çăра курăксем хушшипе, вĕт-шак чулсем çийĕн. Питех те илемлĕ вырăн. Ку вырăн ĕнтĕ чикĕ пулса тăрать. Лешенче урăх çĕршыв.

Акă, эпĕ ăна сыхлама тухнă. Манпа пĕрле манăн тусăм Верный Питех те аслă йытăччĕ вăл. Эпĕ çĕр çумне пуçа чиксе итлеме тăрсанах, те тĕлĕрет тесе, ман тумтирĕн çыртса туртатчĕ.

Эпир утатпăр. Сасартăк ман Верный малалла туртăнчĕ. Вăрах саманта иртрĕ. Инçех мар йывăç тĕми çилсĕрех хумханса илнĕн туйăнчĕ Верный хăлхана тăратса сăнама пуçларĕ. Эпĕ те сăнатăп. Нимĕн палли те çук. Хуллен малалла шăватпăр. Ха, мĕн куратăп эпĕ? Пĕтĕм кĕлеткипех тăсăлса, пĕлĕтелле пăхса вырта парать пĕр çын. «Нарушитель», — шухăш вĕçрĕ ман пуçра. Чĕре хăвăрттăн тапма пуçларĕ.

Эп юриех урăх юлташсемпе калаçнă пек мăкăртатса илтĕм те, хыттăн кăшкăртăм:

— Стой! Ан хускал!..

Пĕр хушă нимĕн сас-чĕвĕ те илтĕнмерĕ. Кăшт тăрсан, суранлă çын ахлатнă пек йăнăшнă сасă илтĕнсе килчĕ. Лайăхрах сăнаса пăхрăм. Тути-çăварĕнчен юн пăчăртатса юхать мĕн. Халĕ эпĕ çын çумнех çывхарса çитрĕм. Куçĕсем сӳнме пуçланă, хăй чылай ватă. Ман малтан ăна пулăшу парас шухăш пурччĕ. Анчах, пĕлнĕ пекех, эп ун çумне пымарăм.

Заставăна систерес тесе, хут ырма лартăм. Унччен те пулмарĕ, суранлă çын сиксе тăрса ман патала чупа пачĕ. Эпĕ нимех те тăваймарăм. Вăл ман çине сиксе ӳкрĕ. Пăвма пуçларĕ. Пирĕн хушăра кĕрешӳ пуçланчĕ.

— Верный! — тесе кăшкăрса илтĕм эпĕ. Çавăнтах мана пĕр сасчĕвĕсĕр «майлас» тесе шухăшланă нарушитель çемçелсе кайрĕ. Ман Верный çурăмран лăскама пуçланă иккен ăна. Эпĕ те ун айĕнчен тухса винтовкăна ярса илтĕм. Анчах çав самантра браунинг сасси илтĕнчĕ. Верный йăнăшса ячĕ. Эпĕ тин сес тĕллесе пемешкĕн хатĕрленнĕччĕ. Татах пенĕ сасă тайга шăплăхне хускатрĕ. Сисмесĕрех персе ятăм. Вара эпĕ тăна çухатса çĕре тĕшĕрĕлсе аннă. Мана ун чух çĕр теменле чӳхенĕ пек, хăлхара такамсем пăшăлтатнă пек туйăнчĕ. Такам ман чĕрене тытса пăхрĕ. Такам мана майласа выртарчĕ.

* *

Виçĕ эрне больницăра выртнă хыççăн, сывалса çитрĕм. Хул кĕкĕнчен шăтарса тухса кайнă пуля. Вăл кунти больницăра сестра пулса ĕçлет иккен. Ашшĕ çинчен калама тăрсан, вăл хĕрелсе илчĕ.

— Нумай пулать унран уйăрални, —терĕ. Унтан манпа чикĕре пулса иртнĕ ĕç çинчен каласса кайрăмăр. Чылай вăхăтран тин Саня темĕнле хуйхăллăн тухса кайрĕ. Сывалса тухсан, ăсатса яма килĕшрĕ.

**

Хĕвел сăртсем хыçне анса ларнă. Тулта янкăр уçă каç тăрать. Тахăш енчен музыка сасси илтĕнет.

Инçех мар Уссури тăхлан тĕслĕн курăнса выртать. Ун çийĕпе шурă пароходсем шăва-шăва иртеççĕ...

Эпир çӳллех мар чăтлăх витĕр тухса Уссури хĕрне çывхаратпăр. Йывăç-курăксен шăршипе киллисе Саняпа юнашар утса пыратпăр.

Эпĕ çамрăк туратсене авса çул уçрăм. Хыçалта утса пыракан Саня ăнсăртран хуллен айлатса ячĕ.

— Турат çапрĕ, — терĕ вăл питне аллипе тытса. Эпĕ ун патне утса пырсан, Саня кĕлеткипе ман еннелле туртăнчĕ. Сисрĕм. Чуп тăвасшăн пулчĕ. Манăн темшĕн кăмăл туртмарĕ. Унтан вăл сасартăках тунсăхланса пуçне чикрĕ. Унăн куçĕсем куççульпе шыварланчĕç курăнать.

— Каçарăр мана... Эпĕ сиртен пытарнă... Эсир тытнă шпион ман атте пулнă... Вăл чикĕ урлă каçса тарма хăтланнă.

Вăл татах темĕскер каласшăн пулчĕ. Анчах каламарĕ.

Эпĕ çамрăк туратсене авса çул уçрăм. Хыçалта утса пыракан Саня ăнсăртран хуллен айлатса ячĕ.

— Турат çапрĕ, — терĕ вăл питне аллипе тытса. Эпĕ ун патне утса пырсан, Саня кĕлеткипе ман еннелле туртăнчĕ. Сисрĕм. Чуп тăвасшăн пулчĕ. Манăн темшĕн кăмăл туртмарĕ. Унтан вăл сасартăках тунсăхланса пуçне чикрĕ. Унăн куçĕсем куççульпе шыварланчĕç курăнать.

— Каçарăр мана... Эпĕ сиртен пытарнă... Эсир тытнă шпион ман атте пулнă... Вăл чикĕ урлă каçса тарма хăтланнă.

Вăл татах темĕскер каласшăн пулчĕ. Анчах каламарĕ.

# Самообложени укçипе усă курни

Иртнĕ çулта пирĕн районра 110 пин тенкĕ ытла самообложени укçи пухнă. Ялсовет исполкомĕ çак укçана, ĕççыннисем сĕнӳ панă шута илсе, шкулсемпе вулав çурчĕсем лартас, колхозлă ялсене ытларах илем кӳрес ĕçе расходланă. Виçи синче вăтам шкул туса çитернĕ, ночоватовăра пуçламăш шкул ларăвĕ Старакра вăтам шкула юсанă, Тĕнче çĕнĕ вулав çурчĕ лартнă.

Районĕпе илсен социальнăй-культурнăй ĕçсем енĕпе 69 пин тенкĕ ытла расходланă.

Ялсенче 1941 çулта самообложени пухма йышăнас шутпа пухусем пиртерççĕ. Ялсовет исполкомĕсем иçулта пăхнă самообложени укçусă курни çинчен ялсенчи ĕççынни умĕнче отчет туса парaççĕ. Нумаçа пулмасть Иваново ялĕнче самообложени пулса иртрĕ. Колхозница Кузнецова юлташ кăçал пухăнакан самообложени укçипе вулав çурчĕ лартма сĕнӳ пачĕ.

**Н. Яснопольский.**

Сĕрпӳ райфинпайĕн заведующийĕ.

# Германия Рузвельт сăмахĕ çинэ панă ответ

БЕРЛИН, декабрĕн 31-мĕш. (ТАСС). Берлинри журналистсем хушшинче Германия Рузвельтăн юлашки сăмахĕ çине мĕнле ответ парассине пысăк интереспе кĕтнĕ. Анчах та Америка президенчĕн сăмахĕ пирки Германи енчен мĕнле комментари те пулман. Çакăн пирки журналистсем хушшинче çапла шутласçĕ: Берлинăн хăйĕн ответне Рима тата Токиопа килĕштермелле пулнă, мĕншĕн тесен Рузвельт хăйĕн сăмахĕнче виçĕ держава пакчĕ çинчен каланă, вăл пакт—США-на хирĕç кĕрешме тунă вăрçăллă союз, тенĕ.

Паян кăнтăрла иртсен ютçĕршывсенчи хаçатсен представителĕсене Германи енчен çапла пĕлтернĕ: Германипе политиксемшĕн Рузвельт сăмахĕ кĕтмен япала пулман, вăл сăмахри аргументсем тĕрĕс мар, унта Германипе Италие кăрентермелле мăшкăллă сăмахсем кала а пĕтернĕ. Америка президенчĕн сăмахĕнче тарăхни сисĕнет пулсан, мĕн ре-ха унăн сăлтавĕ? Çак ыйту çине акă мĕнле ответ пама пулать: Рузвельт чĕри канăççăр, ăна выляса ян вăйă канăç памасть. Англи кунçул мĕнле пулмаллине татса панă ĕнт татăклă решенине Рузвельтăн нимĕнле сăмахĕ те сирсе яраймĕ. Гитлер тĕнчере пуçпулса тăма шутлать тени суя япала. Политикăллă ăç деятельçĕç çавăн пек сăмахсем калани Германипе тĕлĕнтерет. Рузвельт Черчилль евĕрлĕ каласа, Германипе Итали хушшинчи туслăхăн çирĕплĕхĕ пирки иккĕленет. Анчах Рузвельт сăмахĕ вăл вăйăл аргументах мар, Англие çĕмĕрсе тăкас ĕçе чăрмантаймĕ. Англипе Германи хушшинчи отношенисем çине Германи мĕнле пăхни пуринчĕн те палла.

## „Берлинер берзенцейтунг“ хаçат Рузвельт сăмахĕ çинчен

БЕРЛИН, январĕн 1-мĕш. (ТАСС). «Берлинер берзенцейтунг» хаçат Рузвельт сăмахĕ пирки «Начар совесть» ятлă статья пичетлесе кăларнă.

Хаçат сырнă тăрăх, Рузвельт хăйĕн çак сăмахне Европăра Гитлерпа Муссолини демократиллĕ державăсемпĕн пăшăнни вăйлă противниксем пулса пирки тарăхса каланă.

Вăрçă умĕн, тет хаçат, Рузвельт Германие хирĕçле позицин пытанса вакан режиссерĕ пулнă». Ютçĕршыв сен министерстви вăрçă умĕнхи ĕç çинчен пичетлесе кăларнă документсем çакна нимĕн иккĕленмелле р кăтартса пачĕç: вăрçă хатĕрленĕ те татса паракан тапхăрсенче Вангтон Германие хирĕçле ĕçсен центр пулнă. Ку тĕлĕшпе Европăра Булг Рузвельтăн шаннă сынни пулса ненĕ. Вăрçă пуçланнă хыççăн, тет çат, вăрçа малалла тăсас е сарса ас тесе, Америка правительстви шни мелпех усă курнă.

Малалла хаçат çапла сырать: Рузвельт, Германия тĕнчере пуçпулса тăма тăрăшать, тени—тĕрĕс мар. Рузвельт çапла каланă: США çине тапăн ни е тапăнассипе хăратни халиччен пихăçан та пулман-ха, халĕ кăна США-ăлăке умĕне Германи хăрушлăхĕ тăрать, тенĕ. Рузвельтăн çак сăмахĕсене хирĕç «Берлинер берзенцейтунг» уйрăмăнах вăйлăн сырать. Хаçат çавăн пекех тата Рузвельт «Германипе Италине пĕр-пĕринчен уйăрма, вĕсене хирĕçтерсе ярма» ĕмĕтленнине хирĕç сырать. Анчах та, тет хаçат, «Германия, Италия тата Япония Америка хăрушăрлăхĕ çине алă çĕклеме шутланине кăтартса пама Рузвельтăн пĕр факт та çук». Статья вĕçĕнче çапла каланă: Америка халăхĕ çине тĕнĕл держависем мĕнле пăхнине, вăл державăсем США-на хирĕç нимĕнле ĕç те тума шутламаннине Америка халăхĕ лайăх пĕлет

## Англипе Германи хушшинчи вăрçă

БЕРЛИН, январĕн 2-мĕш. (ТАСС). Германири информаци бюровĕ Германи верховнăй командованийĕ каларăçакăн пек сводкăна парать: Герман Лапкă океанри çар карапĕ противкăн суту-илу тумалли суднисене е отивник службинче тăракан судна—вунă судăна—путарни çинчен ттерет.

Январĕн пĕрремĕшĕнче разведкăллă евсем тунă вăхăтра Олдборо çывăнче (Англин кăнтăр-хĕвелтухăç сынĕ) Англин миноносецне атакăланă. иноносеца вут хыпса илнĕ. Ыран январĕн 2-мĕш тенĕ чух çĕрле Германи колечĕсем Центральнăй тата Кăнтăр-Хĕвелтухăç Англири нумай объектăм çине бомбăсем пырса пăрахнă.

Ыран январĕн 2-мĕш тенĕ чух çĕрле Англи самолечĕсем Çурçĕр-Хĕвелтăç Германири 3 пунктра фабрикăсен оруженийĕсем çине бомбăсем пырса рахнă, вăл сооруженисене кăштах ăн кĕнĕ. Сывлăшпи çапăçура Англи пĕр самолетне персе антарнă.

ЕРЛИН, январĕн 2-мĕш. (ТАСС). рманири информаци бюровĕ çапла терет: ыран январĕн 2-мĕш тенĕ çĕрле Германи самолечĕсен пысăк соединенийĕсем Ливерпуль çине рса тапăннă. Германи авиацийĕ Англишни мелпех усă курнă. Германи авиацийĕ Англире тата Лондон районĕнче пуçламалли çуртсене сиен кĕнĕ. Халăх хушшинче темиçе çын вилнĕ тата аманнă.

Декабрĕн 31-мĕшĕнче ирхине тата кăнтăрла Англи самолечĕсем Германири, Голландири тата Бельгири çар объекчĕсем çине кĕтмен çĕртен пырса тапăннă. Самолетсенчен пĕри Кельни промышленность предприятийĕсем çине ăнăçлăн бомбăсем пырса пăрахнă. Англи авиацийĕ Роттердамри нефте хранилище çине бомбăсем пăрахнă.

ЛОНДОН, январĕн 2-мĕш. (ТАСС) Рейтер агентстви çапла пĕлтерет ыран январĕн 2-мĕш тенĕ чух çĕрле Англи самолечĕсем Бременри объектсем çине, çавăн пекех тата Германи оккупацинленĕ территорири çар объекчĕсем çине ăнăçлăн пырса тапăннă.

## Албанири вăрçă ĕçĕсем

АФИНЫ, январĕн 2-мĕш. (ТАСС). ициальнăй йĕркепе çапла пĕлтереç ноябрĕн 29-мĕшпе декабрĕн 28-мĕш шинче Итали авиацийĕ пыра-пыра ăнипе Греции граждăнла халăх шинче 88 çын вилнĕ тата 296 çын аннă. 60 çурта çĕмĕрсе тăкнă, 100 рта пысăк сиен кĕнĕ.

АФИНЫ, январĕн 2-мĕш. (ТАСС). тимирини» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, ксем Химара патĕнчен Валона нелле малаллах кайса пырассĕ. тивникăн тĕп вăйĕсем порта хуте тăрăшассĕ. Фронтăн сылтăм ангĕнче итальянецсем йĕлтĕрлĕ скăсемпне усă курма пуçланă.

## ИТАЛИ КОМАНДОВАНИЙĔН СВОДКИ

ИМ, январĕн 2-мĕш. (ТАСС). Стеи агентстви Итали командованисводкине парать: Киренаика чикри районра, Барди фронтĕнче, арерипе патруль отрячĕсен активĕ палăрать. Противник авиацийĕ ĕн Киренаикăри аэродромсем çине са тапăннă. Кăштах сиен кĕнĕ. нисемпне аманнисем çук. Противăн пĕр самолетне персе антарнă. ли самолечĕсем противникăн мезированнăй чăсĕсемпне укрепленирем çине бомбăсем пырса пăрахнă.

## КИТАЙРИ ВĂРÇĂ

нтăр Китайра. Юлашки вăхăтра ăр Китайра японецсем пысăк вăй пухаççĕ. Хăшпĕр даннăйсем тăКантон районĕнче 70—80 пин салпухса тăратнă. Япони командова Гуандун провинцинче çĕнĕрех наступлени пуçлама хатĕрлетесе шутлаççĕ. Анчах та фронтăн участокĕсенче хальхи вăхăтра мар операцисем кăна пулса пр.

нтральнăй Китайра. Бэйпин — коу чугунçулĕн зонинче, Хубэй инцинче, Китай чăсĕсен активлă не пула Синьянпа Хуаюань станрем хушшинче телеграфла çыхăну татăлнă, çавăн пекех унта поездсем те çӳреймеççĕ.

Декабрĕн 17-мĕшĕнче, Аньцин хулин (Аньхуэй провинцийĕ) хĕвеланăç хĕрисенче Китай чăсĕсем Японии çар склачĕсене çĕмĕрсе тăкнă. Юлашки куисенче Данян—Ичан секторĕнче пысăк мар çапăçусем пулса иртнĕ.

**Çурçĕр Китайра.** Тĕп çапăçусем Шаньси провинцийĕн кăнтăр пайĕнче, Чанцаь—Миньсян участокĕсенче, пулса иртнĕ. Японецсем карательнăй операцисем тунă, анчах вĕсене пысăк çухатусем кӳнĕ.

Январĕн 2-мĕш. (ТАСС).

## Хĕвеллĕ çĕршыĕра

Фрунзе пиртен чылай инçете тăрă олчĕ. Асфальтлă çул тăрăх умлăн ыçлăн темиçе автомашина Токмак е елле ыткăнаççĕ. Çулăн ик айккип е сад. Пиртен сулахай енче сахăр за ючĕсем йăркипе ларса юлаççĕ. Ик нче те тусем.

Пирĕн инçене каймалла-ха, умра 30 ухрăма яхăн. Машинăсем çиçĕм пе ынă çĕртенех Боом-Гайгачайы уще ьине кĕрсе çухалчĕç. Ущельрен пир рĕç верекен çил халлапри çил пе йăлă. Машинăсене каялла тĕртсе ан арассăн туйăнать. Икĕ енче те—тăр ă курăнми тусем. Эпир — чулхӳме ен хушшинче. Çав хӳмесен хушшин ă тĕрлĕ тĕслĕ чулсем темле ăнлан алла мар панорама пек курăнаççĕ ущелье тĕпĕнче Чӳй шывĕ сикĕ ехать. Эпир шыран хăш вырăнта етр, хăш вырăнта 10—15 метр сӳл улатпăр. Нумаях пулмасть, çак çул ырăнĕнче шăши йĕрĕ пек суран çул ес пулнă. Çав «шăши йĕрĕне» хутранитрен тĕвесен караванĕсем, е ашак ине утланнă киргизсем çеç ирткелеç. Халĕ 5 пысăк грузовиксем те, ту йĕнчи кукăр-макăр çул çинче чĕкеç пек выляма хăнăхнă ем-емĕл, е тĕмхуа ЗИС-сем те пĕр тăтăш вĕлтлетеççĕ. Ущелье витĕр 49 километр тухмалла. Çурма çула çитсен, тусен хушшинче акăнса тăракан Чӳй кĕперĕ урлă каçан, сиксе юхакан шыв хĕрринче пĕрген-пĕр вырăсла çурт — шкул ларать. Çав çурт умĕнче Сталин юлташăн шап-шурă чултан тунă скульптури. У умĕнче хĕрлĕ галстук çакнă киргизачисем выляса çӳреççĕ. Вĕсем кунтусем хушшинчи юртăсенчен вĕренӳ тухаççĕ.

Çак пăхма хăрушă тусем витĕр 5 ухрăм ытла чугунçул хывма палăртнă. Çав çул Фрунзери Иссык-Куль хĕррине тухмалла, унтан Цжевальск хулине çитмелле. Çав çула çитес çул га хывма тытăнаççĕ. Акă тата сикес охса выртакан Чӳй шывĕ. Çитес çур çунне Киргизире 100.000 колхозник пĕр çын пек харăс тăрса «Большой Нюйский Канал» тума тытăнаççĕ. Чӳй каналĕн тăршшĕ 221 километр пулмалла. Вара 70.000 гектар çĕр шыв уянать. Мамăк. Рис. Халиччен пĕрчĕ урăк шăтман вĕçĕ-хĕррисĕр аслă, ва пулпа витĕннĕ уйсенче кунти сахăр завочĕсем валли çĕр пиншер тонна ахăр кăшманĕ çитĕнме тытăнать.

* * *

Иссык-Куль тинĕсрен 1.600 метр çӳлте. Ун сарлакăшĕ 80 километр тăршшĕ 200 километр, тарăнăшĕ 80 метр. Кунта ĕмĕрне те пĕр пĕрчĕ юр ӳкмен. Вăл нихçан та шăнмасть. Темиçе тĕрлĕ вĕçен кайăксем çакăнта кĕл касма вĕссе килеççĕ. Унта кайăк сăвакалсем, хур-кайăксем, акăшсипсе çӳреççĕ. Хăшпĕр вырăна пухăнларнă кайăк кăвакалсен ушкăнĕсем ныв варринче утрав пек курăнаççĕ. Çахине вĕçем кӳлĕ хĕррине чăмса ухаççĕ. Иссык-Куль — икĕ ту хушшинче çӳлте выртакан кӳлĕ.

Иссык-Куль хĕрринче государствăн онзавочĕ. Унта чистокровнăй Донской ата Английский рысаксем. Акă, 1937 улта Англирен 25.000 тенкĕ ылтăн арса илнĕ рысак «Армор-Брайт». ăл 1000 метр хушшине 58 секундăра ухать. Çав рысаксем Фрунзе, Алмата, Ташкент, Львов, Мускав ипподромĕсенче те мала тухнă.

— Граждăн вăрçи вăхăтĕнче пирĕн кавалери 80 процент таран Донской лашасем çинче тăнă, — тет завод директорĕ Андреев юлташ,—халĕ пирĕн Хĕрлĕ Çар вăйлă механиаациленнĕ. Çавăнпа кавалерине те çĕнĕ лашасем кирлĕ... Английскипе Донскоя пĕрлештерсен çав çилçунатсене тĕнчере нимĕнле урхамах та çитес çук.

Конзаводăн ытарма çук сад. Футбол пысăкĕт панулмисем ӳсеççĕ. Кило çурă туртакан çĕрулми. Пысăк çын çӳллĕт сĕлĕ кĕлти. Вĕсене Мускава ăсатма хатĕрленĕ. Заводăн вунпĕр пин ытла сурăх. Вĕсем ĕмĕрне картана кĕмесĕр çӳреççĕ. Завод кăçал государствăна ăш-какай тăратас плана 185 процент тултарнă. Анчах асра тытас пулать: çакăнта асăннисем заводăн подсобнăй хуçалăхри тупăшăмсем кăна, пĕтĕмĕшпе вăл — конзавод. Унта табунсем. Рысаксем. Кирлĕ вăхăтра пĕр çак заводран çеç эскадрон хыççăн эскадрон тăшманпа çапăçма тухса кайĕ.

**ВЛ. БАРАЕВ.**

## Экзаменсем пуçланчĕç

УЛАТĂР. Учительсен институтĕнче экзаменсем пуçланчĕç. Экзамена студентсем пуçламăш курсра вĕренекенсем малта пыраççĕ. Математика предмечĕпе 12 студентран 8-шĕ отлично, 2-шĕ хорошо, 2-шĕ посредственно паллăсем илнĕ. Уйрăмăнах Сергеева, Чекушкин, Козлов юлташсем малта пыраççĕ. Вĕсем отлично паллăсем илчĕç.

Чĕлхепе литература факультетĕнче вĕренекенсенчен Павлов вырăс чĕлхипе отлично паллăсем илчĕ. Истори факультетĕнче вĕренекенсенчен Мартынова, Степанов, Мышкин юлташсем срочченех экзамен парса малти ретре пыраççĕ.

Пирвайхи экзаменсем институтра вĕренӳ пахалăхĕ ӳссе пынине кăтартрĕç. Иртнĕ çулта отличниксем 3 студент кăна пулнă. Кăçалхи çул отличниксен йышĕ нумай ӳсрĕ.

**Ф. Белов.**

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Шупашкарти çамрăксем йĕлтĕрпе çӳреме вĕренме тренировкăна тухнă.

Г. Костин фото-ӳкерчĕкĕ.

## Шкулсенче физкультура ĕçне лайăхлатмалла

Физкультурăпа спорт ĕçĕн Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи комитечĕ Шупашкар хулинчи шкулсенчи физкультура преподавателĕсен тата спорт обществисенче ĕçлекенсен канашлăвне ирттерчĕ. Канашлура шкулсенче физкультура ĕçне лайăхлатас ыйтăва сӳтсе-явăрç.

Хулари шкулсенче физкультура коллективĕсем çителĕксĕр ĕçлеççĕ. Спорт секцийĕсен ĕçĕ начар. Физкультура преподавателĕсем расписанисем тăрăх вĕрентнисĕр пуçне, урăх нимĕнех те тумаççĕ. Физкультура енĕпе ачасен пултарулăхне сарса ныман.

Иккĕмĕш номерлĕ шкулти физкультура преподавателĕ А. Семенов вишкулта ĕçлет. Çавăнпа та вăл пĕр шкулта та физкультура ĕçне кирлĕ пек туса пымасть.

Шкулта вĕренекен ачасем хушшинче БГТО значокĕн нормисене парас ĕçе физкультура преподавателĕсем тӳсе пымаççĕ. Çакăн пирки 1940 çулта БГТО значокĕн нормисене парас плана республикăра 17 процент çăна пурнăçланă. Кунта спорт обществисем те айăплă. Вĕсем хăйсем шефа илнĕ шкулсене физкультура ĕçне сарса пыма çителĕксĕр пулăшнă.

«Динамо», «Медик», «Большевик», «Буревестник» спорт обществисем 1940 çулта шкулсенче пачах та ĕçлемен. Хулари шкулсенче физкультура ĕçне çителĕксĕр туса пыни йĕлтĕрçĕсен декабрĕн 22-мĕшĕнче пулса иртнĕ ăмăртăвĕнче те уçăнах палăрчĕ. Пединститут пысăк шкулсенчен пĕри пулса тăрать. Кунта физкультура преподавателĕсем те виççĕ. Анчах ăмăртăва 50 çын кăна тухнă.

Ялхуçалăх институтĕнче физкультура преподавателĕ пулса Копченова çлет. Вăл институтри физкультура коллективĕн ĕçĕсене ертсе пымасть. Шкулта вĕрентнисĕр пуçне урăх нимĕн те тумасть. Институтри студентсем ГТО нормисене пама тытăнман тата хĕллехи ăмăртусенче те хутшăнмасăр тăраççĕ.

Физкультура ĕçĕсен комитечĕ шкулсенче ĕçлессине вăйлатма йышăнчĕ. Спорт обществисене шкулсенче физкультура коллективĕсем тума хушнă. Республикăри шкулсене пурне те уйăм спорт обществисем сумне çирĕплетнĕ.

Шкулсенче вĕренекен ачасемпе физкультура енĕпе занятисем ирттерме спорт хатĕрĕсем, катоксем, йĕлтĕр тата шыв станцисене тӳлевсĕрех усă курма ирĕк панă.

Спорт обществисен партин XVIII конференцийĕ ячĕпе пыракан ăмăртăва хутшăнса ГТО, БГТО нормисене парас тата физкультура ĕçĕсене шкулсенче сарса пырас çĕрте пысăк çитĕнӳсем тăвассишĕн кĕрешмелле.

**Г. Иванов.**

## Актив çар ĕçне вĕрэнет

Партипе совет активне çар ĕçне вĕнтес ĕçе эпир иртнĕ çулхи декабрь йăхĕнче тытăнтăмăр. Актив çар ĕçне мĕнле пысăк хастарлăхпа вĕренме тăрăшни малтанхи занятисенчех лайăх палăрчĕ. Пирвайхи занятине 92 çын пымалла пулнă пулсан, 76 çын пынă. Çар ĕçне вĕренме эпир пĕтĕмпе 142 çынна янăстартăмăр. Занятисем эрнере пĕрре пулса иртеççĕ Занятисене çар ĕçне лайăх пĕлекен, опытлă работниксем — запасра тăракан кĕçĕн лейтенантсемпе лейтенантсем тата старший лейтенантсем ертсе пыраççĕ. Иккĕмĕш номерлĕ группăна запасра тăракан старший лейтенант М. Лебедев юлташ, 3-мĕш группăна лейтенант Н. Мослов юлташ ертсе пыраççĕ, вĕсемех командирсем пулаççĕ.

Декабрь уйăхĕнче эпир виçшер заняти ирттертĕмĕр. Вăл занятисенче дисциплинарнăй устав, шалти служăбан уставне вĕреннĕ тата строевой занятисем ирттернĕ, винтовка пайĕсене вĕренессипе те занятисем пулнă. Вĕренӳ программинче уйрăмăнах тактически вĕренӳпе огневая подготовка ыйтăвĕсем пысăк вырăнта тăраççĕ. Тактически занятисем уйăра ĕлтĕрпе пулмалла. Ăна эпир канмалли кунсенче ирттеретпĕр.

Анчах пирĕн хăшпĕр çитменлĕхсем те пур-ха. РККА уставĕсем сахалли командирсене занятисене хатĕрленме чăрмантарать.

**Ф. Ижутов.**

ВКП(б) Çĕмĕрле райкомĕн çарĕç отделĕн заведующийĕ.

## 22 кун пăр татăкĕ çинче

Чукоткăри Анадырь больницинче Шелагский мысĕнчи çамрăк охотник Иван Алексеевич Тищенкона илсе пынă. Вăл 22 кун пăр татăкĕ çинче тинĕсре куçса çӳренĕ. Восточно-Сибирское тинĕсрен охотникпе пĕрле пăр татăкĕ Чукотка тинĕсне куçса пынă Тищенко сывлăхĕ лайăх. Пăр çинче куçса çӳрени çинчен вăл çапла каласа панă:

«Октябрĕн 29-мĕшĕнче, каç пулас умĕн, эпĕ йытăсене нартăна кӳлсе ухутана тинĕселле тухса кайрăм. Тинĕс çине 12 километр кĕнĕ вăхăта, тинĕс пăрĕ çыран хĕрринчен татăлса шалалла куçма тытăнчĕ. Эпĕ 10 метр тăршшĕ (тата çавăн чухлех сарлакăш те) пăр татăкĕ çине тăрса юлтăм. Çурçĕр енчен вĕрекен çил пăр татăкне Беринг проливĕ еннелле илсе кайрĕ Виçĕ кун нимĕн çимесĕр-ĕçмесĕр иртрĕ. Акă халех пĕр-пĕр çыран хĕррине пырса тухатăп пуль, тесе шутлатăп Вăйлă сивĕсем пуçланчĕç. Шăнса ларас мар тесе эпĕ пăр çинче урлă-пирлĕ уткаласа çӳретĕп. Талăкĕ-талăкĕпе ывăрмасăр ура çинче вăхăта ирттеретĕп. Çавнашкал сакăр талăк ирхе çӳренĕ хыççăн эпĕ шатрашкаллă пысăк пăрсем хушшине пырса кĕтĕм. Çил вăйлансах пырать. Пăрсем хушшинчи ывăш шăнса ларчĕ. Эпĕ йытăсене нартăран тăвартăм та пĕчĕк пăшал илсе çыран еннелле утрăм. Виçĕ сехет утсан пăрсем хушшинчи пысăк шыв хĕррине çитсе тăтăм. Канма лартăм Кунти шыв çинче пĕр кăвакал (тинĕс кăвакалĕ) курах кайрăм. Пăшалпа ерсе тытрăм та тĕкĕсене тасатса кăвакала чĕрĕллех çирĕм.

Канна хыççăн самаях вăй хушăнчĕ. Малалла, çыран хĕрнелле пăрсем çийĕн утрăм. Икĕ талăк пĕр чарăнмасăр утрăм. Ывăнса çитсен чарăнтăм та йĕри-тавра пăхатăп. Аякра чайкăсем вĕçĕççĕ, ман паталла вĕссе пымаççĕ. Çиес килет тӳсме çук. Çав вăхăтрах манăн йытăсенчен пĕри ман пата пырса çитрĕ. Ерсе вĕлертĕм те тирне сĕвсе ашне чĕрĕллех çиме тытăнтăм. Тирĕпе урасене чĕркерĕм. Вунпиллексăн кунĕнче нарпăна ерсе тытрăм. Пуç мимипе ӳпке-пĕверĕсене ăшăллах çисе ятăм. Кун хыççăн манăн вăй çĕчĕ.

Пăр татăкĕ çинче куçса çӳренĕ чух нимĕнрен ытла çĕр каçасси тӳсме çук кĕн. Çĕркаçасси çулталăк пек туйăнать. Тул çутăлсанах вăй-хал кĕрет, ара сыран еннелле çул шырама тытăнатăп.

Эпĕ тăрса юлнă пăр татăкĕ çирĕмĕш кунĕнче Колючкин утравĕ патне çитсе парăнчĕ. Утрав çине тухса та пăхмарăм, мĕншĕн тесен, унта пурнакансем çук. Ку утрав патĕнчен икĕ кун пăрем çийĕн утрăм. Çанталăк ăшăтма уçларĕ, вăйлă тăман çавать. Пăрсем хушшинче шăннă сӳхе пăр ванать, малалла кайма çук. Вара эпĕ пĕр çирĕрех пăр татăкĕ çинче çĕр каçрăм. Çурçĕр иртсен йытăсем уланă сасă илтех кайрăм. Савăннипе пăр татăкĕ çинче ача пек урлă-пирлĕ чупса йĕреĕп, кăшкăратăп, кулатăп. Анчах саннипе пĕрлех манăн йывăрлăх та пысăклансах пырать. Йĕпе юр çаплах çавать. Манăн пăр татăкĕ хумханать. Темиçе хут та эпĕ пăр татăкĕ çинчен шуса шыва ӳкме патне çитнĕ, вак пăрсем ăшне урасене чиксе кăларнă.

Ноябрĕн 23-мĕшĕнче ирхине çĕр мĕлкисем курăнчĕç. Тул çутăлсан çĕр енне утма тытăнтăм. Икĕ сехет утсан инçетре çуртсем те палăрма пуçларĕç. Вара савăннипе манăн вăй кĕчĕ. Пĕр пăр татăкĕ çинчен тепри çине куçа куçа каятăп. Çыран хĕрринчи çынсем мана асăрхарĕç. Вĕсем мана хăй еннелле пымаллине аллисемпе сулласа кăтартрĕç. Утма вăй пĕтсе çитрĕ, вара эпĕ пĕр татăкĕ хĕррине çитсе çĕр каçрăм. Çурçĕр иртсен йытăсем уланă сасă илтех кайрăм. Савăннипе пăр татăкĕ çинче ача пек урлă-пирлĕ чупса йĕреĕп, кăшкăратăп, кулатăп. Анчах саннипе пĕрлех манăн йывăрлăх та пысăклансах пырать. Йĕпе юр çаплах çавать. Манăн пăр татăкĕ хумханать. Темиçе хут та эпĕ пăр татăкĕ çинчен шуса шыва ӳкме патне çитнĕ, вак пăрсем ăшне урасене чиксе кăларнă.

Ноябрĕн 23-мĕшĕнче ирхине çĕр мĕлкисем курăнчĕç. Тул çутăлсан çĕр енне утма тытăнтăм. Икĕ сехет утсан инçетре çуртсем те палăрма пуçларĕç. Вара савăннипе манăн вăй кĕчĕ. Пĕр пăр татăкĕ çинчен тепри çине куçа куçа каятăп. Çыран хĕрринчи çынсем мана асăрхарĕç. Вĕсем мана хăй еннелле пымаллине аллисемпе сулласа кăтартрĕç. Утма вăй пĕтсе çитрĕ, вара эпĕ пĕр татăкĕ хĕррине çитсе çĕр каçрăм. Çурçĕр иртсен йытăсем уланă сасă илтех кайрăм